Ял тăрăхĕсен кунĕсем – малашлăхăн пуçламăш чиккисем

# "Мĕн тунине упрасах хăварасчĕ",–




Тренккăри врач амбулаторийĕн ĕçченĕсен сÿтсе явмалли тупăнсах тăрать.



Ильинкăри вăтам шкулта уçнă ача садне çÿрекен шăпăрлансем халех шкул хăлăпне тытма пултарнă та...



1984 çулта çĕкленнĕ ача садне йывăççем "хуплаççĕ". Хуçа тупăнĕ-и кунта?

кашни калаçаканăн сăмахне шута илсе тĕв турĕç Ильинка тăрăхĕнче пурăнакансем район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ю. Ивановпа Муркашран килнĕ ытти ответлă специалистсем, ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Б. Сапожниковпа депутатсен районти тата ял тăрăхĕн Пухăвĕсен депутачĕсем, ял тăрăхĕн специалисчĕсем январĕн 23-мĕшĕнче Тренккăри Культура çуртĕнче Ильинка ял тăрăхĕн кунне пĕтĕмлетме пухăннă май.

**ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ**

Ильинка ял тăрăхĕнче икĕ ял хуçалăх производство кооперативĕ: "Хлебороб" тата "Волга". Ку тăрăха кĕрекен 17 ялта пурăнакан 2237 çын 1078 килти хушма хуçалăха тытса тăрать тата аталантарать. Пĕрлешÿллĕ хуçалăхсем пĕлтĕр пĕтĕмпе 152,7 тонна сĕт (виçĕм çулхин 56,8 процентĕ), 263 центнер аш-какай (53,3 процент) туса илнĕ. Усă куракан 100 гектар çĕр пуçне аш-какайпа сĕт туса илесси те пĕтĕмĕшле кăтартусенчен пит уйрăлсах тăмасть. Ку чикĕпе пăхсан, иртнĕ çул Шашкарсемпе Тренккăсем 109,3 центнер сĕт (виçĕм çул 193 центнер пулнă), 18,8 центнер аш-какай (2005 çулта 35,4 центнер) туса илнĕ. Хуçалăхсен ĕçне туллин кăтартас тесен ÿсен-тăран отрасльне те айккине хăварни вырăнлă пулмалла мар. Пĕлтĕр "Волга" хуçалăх 435 гектар çине акнă тырă-на пĕтĕмпех пуçтарса кĕртнĕ пулсан тата вĕсен вăтам тухăçĕ 25,1 центнерпа танлашнине пăхсан, "Хлебороб" хуçалăхăн 70 гектар тырри пуçтарăнман та. Илнĕ тухăç та районăн вăтам кăтартăвĕ гектар пуçне 16 центнер пулсан, Тренккăра 13,2 центнер кăна. Агротехникăна пăхăнса ĕçлесен кунти çĕр те пысăк тухăç пама пултарнине кăтартакан пĕр тĕслĕх çеç: "Волга" хуçалăх пĕлтĕр 30 гектар çинче лартнă çĕр улмирен районăн вăтам кăтартăвĕнчен (148 центнер) пысăкрах тухăç илме пултарчĕ: 152 центнер. Пулнă ларутăрăва тивĕçлипе хакласа кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен "Волга" хуçалăх "Хлебороба" арендăна илнĕ. Çак çула суйласа илни ку тăрăха çывхаракан çур аки çине шанчăклăрах пăхма май парать.

Пĕрлешÿллĕ хуçалăхсем иртнĕ çул туса илни чикĕ пулманнине уйрăм çынсен килти хушма хуçалăхĕсенчи ĕç кăтартăвĕсем те яр уççăн çирĕплетеççĕ. Ял тăрăхĕпе илсен, килти хушма хуçалăхри çĕр улми анисем пурĕ 104,5 гектар йышăнаççĕ пулсан, ял çыннисем ун çинчен илнĕ тухăç гектар пуçне 228,9 центнерпа танлашать. Пахча çимĕçе гектар пуçне 236,2 центнер туса илни те Тренккăпа Шашкар тăрăхĕнчи çĕрсен пархатарне кăтартать. Çакна татах та малалла аталантарма иртнĕ çул Ильинка ял тăрăхĕпе 34 хушма хуçалăх "АПК аталантарасси" наци проекчĕпе килĕшÿллĕн 4945 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ.

**СЫВЛĂХА СЫХЛАССИ, КУЛЬТУРА**

Ку тăрăхри ял çыннисене медицина пулăшăвĕ парассипе Тренккăри врач амбулаторийĕсĕр пуçне Апчарти, Вăрманкассинчи, Мăн Шашкарти фельдшерпа акушер пункчĕсем ĕçлеççĕ. Ял культурине тивĕçлĕ шайра тытас ĕçре Тренккăри, Апчарти, Вăрманкассинчи Культура çурчĕсемпе Мăн Шашкарти клуб тата Апчарпа Мăн Шашкарти ял библиотекисемпе Ильинкăри тĕслĕх библиотека пысăк вырăн йышăнаççĕ. Ильинкăри вăтам тата Вăрманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкулпа Апчарти пуçламăш шкул-ача сачĕн коллективĕсем хăйсен ĕçĕсемпе пурнăçран юлса пыраççĕ теме чĕлхе çаврăнмасть пулсан та, Тренккăри "Колосок" ясли-сад 10 çула яхăн ĕçлеменни кунта юхăнчăк çул хывни пирки калать. 1980-мĕш çулсен пуçламăшĕнче пысăк укçа хывса çĕкленнĕ икĕ хутлă çурт паян никама та кирлех мар пулас: чÿречесем ваннă, çурта хутса ăшăтмалли пăрăхсем наци проекчĕсем çутă кун куриччен чылай маларах шартлама сивĕпе хуçасăрлăха парăнса сиксе çурăлнă, вунă çул ачасем такăртатнă çула курăк хупласа хунă, утма çул çине вĕлтĕрен шăтнă, юхăнакан тамбура вунă çул каялла шăтса вăй илнĕ йывăççем çын куçĕнчен пытарма хăтланаççĕ. Кунта хуçа килесси пирки сăмах-юмах Атăл хĕрринче пĕрремĕш çул мар çÿрет, анчах ау! ăçта хуçа? Кунта хăй вăхăтĕнче 19 ялтан автобуспа ачасене садике илсе çÿрени паян ĕненмелле мар янăрать. Патшалăх çавăншăн укçа хывнăçке унта, юхăнтарассишĕн мар.

Хуçа тата хуçалăх тенĕрен. Çулталăк каялла Тренккăри врач амбулаторине участокри врач-терапевт пулса Николай Егорович Иванов ĕçлеме килет. Килет те сывлăх хуралĕнче 26 çул вăй хунă врач кунти сывлăх хуралне те çĕнĕ варкăш кĕртет. Халĕ, акă, февралĕн 1-мĕшĕнчен кунта кăнтăрлахи стационара ĕçлеттерме тĕллев пур. Ырă тĕллев пурнăça кĕрессе ял çыннисем шансах кĕтеççĕ. Врач амбулаторийĕнче вара пуян опытлă специалистсем вăй хураççĕ. Галина Владимировна Скачкова шăл тухтăрĕ хăй суйласа илнĕ ĕçпе Тренккăра 1988 çултанпа тăрăшать. Медицинăри ĕç стажĕ 32 çултан та иртнĕ Антонина Ивановна Сапожникова ача-пăча медсестри те ку амбулаторире 5 çул. Нинель Владимировна Бычкова участокри медсестрапа Людмила Леонидовна Архипова фельдшерăн ĕç стажĕсем те 16 çултан иртрĕç ĕнтĕ. Зинаида Ильинична Яртеева санитарка та врач амбулаторийĕнче чĕрĕк ĕмĕр ытла.

**А.БЕЛОВ.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

Ял тăрăхĕсен кунĕсенчен

# Ыйтусем хуравсенчен ытларах

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Тĕл пулура Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.П. Александров 131 № Федераллă саккуна пурнăçа кĕртессипе иртнĕ çул мĕнле ĕçлесе пыни пирки отчет туса пачĕ, хăйсене шанса панă ĕç участокĕсенчи лару-тăрупа Шетмĕпуç шкулĕн директорĕ А.В. Степанова, Тивĕш шкулĕн директорĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.А. Федотова, Шетмĕпуçĕнчи врач амбулаторийĕн ертÿçи Т.С. Казакова, Мичурин яч. хис. хуçалăх ертÿçи Б.Н. Михайлов паллаштарчĕç, вырăнти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ А.П. Петров тухса калаçрĕ, ыйтусем паракансем йышлă пулчĕç. Ял тăрăхĕн кунĕн итогĕсене район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов пĕтĕмлетрĕ.

Мĕн калама пулать-ха чи малтанах. Çулталăк хушшинче туса ирттернĕ ĕçсем, малашлăхлă утăмсем çук мар. Анчах та татса памалли ыйтусем те сахал мар. Юлашки вăхăтра çулсем тăвассипе тимлеме тытăнни сисĕнет. Шетмĕпуçĕнче тĕслĕх библиотека уçнă. Хальхи вăхăтри кирлĕ ĕç хатĕрĕсемпе тивĕçтернĕ ăна. Тавралăха тирпей-илем кĕртессипе те ĕçлемен мар. Шкул ачисен, ватă çынсен вăйĕпе 5000 тĕп йывăç лартса хăварнă. 7 ăмăрту ирттернĕ ял тăрăхĕн территорийĕнче. Ку енĕпе шкулта спортзал пурри пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çынсен килти хушма хуçалăхĕ аталанни палăрать. Ăна аталантарма иртнĕ çул 20 çын 2930 пин тенкĕ кредит илнĕ. Килти хуçалăхсенче тытса усракан мăйракаллă шултра выльăхсен, сыснасен, сурăхсен йышĕ ÿссе пырать.

Тĕрлĕ техника туянакансем, арендăна çĕр илсе хăйсен ĕçне кÿлĕнекенсем çук мар. Пĕрремĕш утăмсем япăх мар.

Çапах та... Акă, ял тăрăхĕпе бюджета тупăшсем енĕпе мĕнле пурнăçланин кăтартăвĕсене тишкерес пулсан та, 2006 çул валли палăртнисемпе 2006 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕ тĕлне пурнăçланин цифрисем расна. Налук тупăшĕсем те пĕчĕкрех, предпринимательство ĕçĕ-хĕлĕнчен те кирлĕ чухлĕ налук пухайман, пурлăх çине хуракан налук та палăртнинчен сахалрах. Ку вара мĕне пĕлтерет-ха? Апла пулсан ял çыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатса пырассипе, вĕсен кулленхи ыйтăвĕсене татса парассипе палăртнă хăшпĕр ĕçсем пурнăçланмасăрах юлнă.

Çĕр пайĕсене харпăрлăха илессипе те йĕркеллех мар. Пĕтĕмпе 966 çĕр пайĕ палăртнă. Çав шутран 149 çын çĕр пайĕсене илнĕ, 373-шĕ пĕлтерÿсем панă, 68-шĕ çĕр пайĕсене илместпĕр тесе пĕлтернĕ. Ыттисем вара хăйсем мĕн тăвассине халĕ те татса калаймаççĕ.

Шетмĕпуç тата Тивĕш шкулĕсенче вĕрентÿпе воспитани ĕçĕсене йĕркеллех туса пыма майсем пур пулсан та, Тивĕш шкулĕнче вĕренекенсен йышĕ чакса пыни шухăшлаттарать. Шкул директорĕ В.А. Федотова каласа панă тăрăх, халĕ кунта пĕтĕмпе те 67 ача кăна вĕренет. 4 район чиккинче вырнаçнă çак шкулта вĕренекенсен йышĕ юлашки çулсенче 80 вĕренекен таран чакнă. 9 класс хыççăн тухса каякансем те пур. Шкулăн статусне вара сыхласа хăвармаллах, вĕренекенсен йышне ÿстерме майсем шырамалла. Кунта шкул çулне çитмен ачасен ушкăнĕсене уçас ыйтăва хускатакансем те пулчĕç тĕл пулура.

Тепĕр пысăк ыйту – кунти Мичурин яч. хис. хуçалăхри лару-тăру. Кунти ĕçсемпе хуçалăх ертÿçи Б.Н. Михайлов паллаштарчĕ. Апла пулин те çак чăнлăха пытараймăн. Хуçалăх пысăк парăмсен аварне кĕрсе ÿкнĕ. Унтан епле тухса пĕтесси паллах мар. Çавна май çамрăксенчен нумайăшĕ ытти регионсене, хăшĕсем кÿршÿ хуçалăхсене ĕçлеме çÿреççĕ. Чылайăшĕн шухăшĕпе хуçалăха тĕллевлĕн, ятарласах панкрута кăларнă. Панкрут процедурине темиçе хут та тĕрлĕ вăхăта куçарнă. Ĕçĕ вĕçленмен-ха. Тĕрлĕ техникăна сутса янă тĕслĕхсем çук мар. Кама, мĕн хакпа? Хуçалăх ĕçченĕсем ăна пĕлмеççĕ. Уçăмлăх, уççăнлăх çукки вара тĕрлĕ сас-хура çуратать, çынсем кăмăлсăр. Борис Николаевич çывăх вăхăтрах Мичурин яч. хис. хуçалăх вырăнне «Мичурин яч. хис. агрофирма» чикĕллĕ яваплăхлă общество йĕркелесси, çавна валли кирлĕ документсене хатĕрлесе çитерни пирки пĕлтерчĕ. Анчах та çапла тунипех йывăрлăхсенчен тухма пултарасси иккĕленÿллĕ.

– 50 çула яхăн ĕçлерĕм эпĕ çак хуçалăхра. Ферми те, техники те пулман. Ĕçлерĕмĕр, турăмăр, туянтăмăр. Хăй вăхăтĕнче кустăрмаллă 36, гусеницăллă 25 трактор пулса. Çулĕсене те хамăр вăйпах тунă, шыв пăрăхĕсене хунă. Халĕ мĕнпе тăрса юлтăмăр-ха? 2-3 çул хушшинче пĕтĕмпех салатса, вăрттăн сутса пĕтерчĕç,– хăйĕн чун ыратăвне пытараймарĕ ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ А.П. Петров.

Ял тăрăхĕн кунĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ А.Н. Иванов бюджет ужрежденийĕсемпе организацийĕсенче ĕçсене пĕтĕмĕшле япăх мар йĕркеленине палăртрĕ. Апла пулин те ял хуçалăх производствинчи лару-тăру шухăшлаттарать. Саккунлăх, йĕркелĕх вара пулмаллах. Кун пек йĕркесĕрлĕхсем Шетмĕпуç тăрăхĕнче кăна мар, районти ытти хăш-пĕр хуçалăхсенче те пулнă. Саккуна пăсакансем тĕрмене лекни те пур. Экономика преступленийĕсене тĕпчекен тивĕçлĕ органсем ку ĕçсене вĕçне çитереççех. Ял тăрăхĕн те вырăнти хăй тытăмлăх влаçĕпе çирĕпрех усă курмалла.

Пуçарулăх çитсех каймасть çынсен. Ял хуçалăх продукцине туса илекен, продукци тирпейлекен кооперативсем йĕркелесси паянхи куншăн малашлăхлă. Патшалăх та ку енĕпе пулăшать. Апла пулсан такам çине шанмалла мар, хамăрăн пуçаруллăрах пулмалла.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Çатракасси шкулĕнчен пĕлтереççĕ

## Шкул уявĕ

Январĕн 15-мĕшĕ Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкулта вĕренекенсемпе вĕрентекенсемшĕн паллă кун пулчĕ. Çак кун пирĕн шкула уçнăранпа 105 çул çитрĕ.

1902 çулхи январĕн 15-мĕшĕнче Çатракассинче земски училище ĕçлеме пуçланă. Ăна уçассишĕн вырăнти хресченсем нумай тăрăшнă. Çакăн çинчен тата шкулăн пĕр ĕмĕр ытларахри кун-çулĕпе аталанăвĕ тата паянхи ÿсĕмĕсем çинчен чĕннĕ хăнасемпе вĕренекенсене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Э.Д. Ярикова каласа пачĕ. Уява килнĕ ĕç ветеранĕсем, тĕрлĕ çулсенче çак шкулта ĕçленĕ учительсем, шкултан вĕренсе тухса пурнăç çулĕ çине тăнисем тăван шкул çинчен нумай ăшă сăмах каларĕç. Шкулта вĕреннĕ, ĕçленĕ вăхăтри асра юлнă самантсем ума тухрĕç. Ачасене çак шкулта пуçламăш классенче нумай вĕрентнĕ Т.И. Авилова каласа пани, ют чĕлхене вĕрентекен Г.Н. Ильдерова хăй çырнă сăвăна вуласа пани, музыка ертÿçи В.Г. Теплов аса илни уява пынă кашни çыншăнах питĕ интереслĕ пулчĕ. Хăнасем çак кун шкулти историпе краеведени музейĕнче пулса çĕнĕ экспонатсемпе паллашрĕç. Унтан шкул ачисен "Журавушка" кăтартуллă ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе уява савăнăç сăнĕ кĕртрĕ. Шкул 105 çул тултарнă ятпа ирттернĕ уяв пурне те килĕшрĕ.

**Хамăр инф.**

## Туслăх кĕперĕ

Çатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкулта ашшĕ-амăшĕсем – ялан кĕтнĕ хăнасем. Çулленех кунта вĕсем хутшăннипе тĕрлĕ уявсем иртеççĕ.

Акă, кăçалхи вĕренÿ çулĕн иккĕмĕш чĕрĕкĕн вĕçĕнче пирĕн патăмăрта "Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье" ăмăрту иртрĕ. Çав кун уроксем вĕçленсен те шкулта ача-пăча сасси пĕтмерĕ: шкула Çатракассисемсĕр пуçне Ятмантан, Шупуçĕнчен, Çĕньял Хуракассинчен, Очăкассинчен çÿрекен ачасен ашшĕ-амăшĕсем çемьесемпе вăй висме хаваслă стартсене пухăнчĕç.

Палăртнă вăхăта район администрацийĕн вĕрентÿпе çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертÿçи Л. Мочалов, Çатракасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю. Кожевников (вăлах тĕп спонсор та пулчĕ) килсе çитрĕç. Вăхăт çитсен вĕсем старта тухакан çемьесене ăнăçу сунса ăмăрту пуçланни çинчен пĕлтерчĕç.

Спорт залĕнче виçĕ команда йĕркеленсе тăчĕ: "Крепость", "Волчок", "Шип-шип" – пурĕ 6 çын. Ăмăртăва ертсе пыракан Л. А. Яриков хăйĕн пĕрремĕш сăмахĕсенчех стартсем интереслĕ пуласса шантарчĕ. Шантарни чăннипех тÿрре килчĕ: командăсем çĕнтерĕве 10 тĕслĕ стартра туптарĕç. Вĕсем: туслăх çулĕ хывасси, кусакан кăшăл витĕр тухасси, кенгуру, туннель витĕр иртесси, тĕл пересси, мат çинче тĕрлĕ майлă çаврăнасси, канат туртасси т. ыт. те.

Куракансен тунсăхлама вăхăт пулмарĕ. Çатракасси шкулĕн ачисем стартсем хушшинче музыка саманчĕсемпе тыткăнларĕç.

Жюри членĕсене те çĕнтерÿçĕсене палăртма çăмăлах пулмарĕ. Анчах... Куçса çÿрекен кубока Çатракассинчи М.М. Димитриев, Э.С. Димитриев çемйисем çĕнсе илчĕç. Пĕр çемье те парнесĕр юлмарĕ.

**С. ФЕДОРОВА,**
**пуçламăш классене вĕрентекен.**